Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсемпе

Çыншăн ĕç тĕп вырăнта пулма тивĕç

Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕ яланах çивĕч ыйтусенчен пĕри пулнă. Тĕнче экономикинчи хальхи тăнăç мар лару-тăру тапхăрĕнче вара вăл татах çивĕчленчĕ. Унччен йĕркеллĕ ĕçленĕ предприятисен продукци туса кăларасси чакать, хăш-пĕр предприятисем пачах хупăнаççĕ, ĕç вырăнĕсем пушанаççĕ, ĕçсĕрлĕх шайĕ ўсет.

Çак кунсенче район хаçачĕн сотрудникĕ районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертўçипе Тамара Афанасьевна АНТОНОВАПА тĕл пулнă, районти ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсене уçăмлатма ыйтнă.

– Тамара Афанасьевна, районти ĕç рынокĕнчи паянхи лару-тăрупа паллаштарăймăр-ши?

– Кăçалхи январь–сентябрь уйăхĕсенче ĕçе вырнаçас ыйтупа пирĕн центра 1338 çын килчĕ. 2008 çулхи çак тапхăрта ку хисеп 804 çынпа танлашăччĕ.

Ĕç шыракансенчен 28,3 проценчĕ ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе е икĕ енĕ те килĕшнипе тухнă. Çынсен 4,3 проценчĕ штатсене чакарнипе ĕçсĕр тăрса юлнă. Ĕçпе тивĕçтерекен центра пынисенчен 46,9 проценчĕ – 14–18 çулсенчи çул çитмен граждансем. Вĕсем вĕренўрен пушă вăхăтра ĕçлеме кăмăл тăваççĕ. 3,5 процент – шкулсенчен тата професси вĕрентĕвĕн заведенийĕсенчен вĕренсе тухнисем, ĕçлеме тытăнманнисем. Уйрăмах социаллă хўтлĕхе тивĕçнисем 17 процент шутланаççĕ. Кунта нумай ачаллă тата ачисене пĕччен пăхса ўстерекен ашшĕ-амăшĕсем, инвалидсем, ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен тавраннисем, пенси çулне çитсе пыракан граждансем, çар службинчен тавраннисем тата ытти сем кĕреççĕ.

Ĕç шыракансенчен 56 процентне яхăн – хĕрарăмсем. 16 – 29 çулсенчи çамрăксем 57 процент шутланаççĕ.

Иртнĕ тăхăр уйăхра 582 çынна ĕçсĕррисен шутне кĕртсе регистрациленĕ. 581 çынна вара ĕçсĕррисен шутĕнчен кăларнă. Вĕсенчен 336 çынна (57,8 процент) ĕç тупса панă, 54 çынна (9,3 процент) професси енĕпе вĕренме янă, 9 çынна (1,5 процент) ĕç пенсийĕ пама тытăннă, ытти сăлтавсемпе учетран кăларнисем 182 çын (31,4 процент).

2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçпе тивĕçтерекен центрта 145 çын учетра тăнă. Ĕçсĕрлĕх шайĕ экономика тĕлĕшпе активлă çынсен 0,66 проценчĕпе танлашать.

– Республика Министрсен Кабинечĕ иртнĕ çул йышăннă «2009 çулта Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерессипе хушма пулăшу парасси çинчен» тĕллевлĕ республика программине çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне, Чăваш Республикинче пурăнакансене 2007 – 2010 çулсенче ĕçпе тивĕçтерессипе йышăннă ведомство тĕллевлĕ программине пурнăçласа мĕнле ĕçсем туса ирттерме май килчĕ-ха?

– Çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Тĕллевлĕ ĕçлесе пынин усси çук мар. Сентябрь уйăхĕнче районта ĕçсĕр юлнă граждансен йышĕ ўссе пырасси чарăнчĕ. Асăннă программăсене пурнăçа кĕртсе пынă май 2009 çулхи январь–май уйăхĕсенче 1031 çынна ĕç тупса патăмăр. Вăл шутран ĕç паракансем заявлени панă вакансисемпе 694 çынна ĕçе вырнаçтарнă, 111 çынна обществăлла ĕçсене янă, ĕç тупассипе уйрăмах йывăрлăхрисене 3 çынна вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ. 14 – 18 çулсенчи çул çитмен çамрăксене ĕçпе тивĕçтересси çине те тимлĕх уйăратпăр, вĕсем вĕренўрен пушă вăхăтра ĕçлесе илме пултарччăр тетпĕр. Кун пеккисене 628 çынна вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă.

– Чылай чухне çынсем хăйсем илнĕ профессипе ĕç вырăнĕ тупайманни палăрать. Ку ыйтăва епле татса паратăр?

– Кун пек чухне çынна тепĕр професси илме пулăшасси, квалификацие ўстерме майсем туса парасси тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Иртнĕ тапхăрта çапла майпа ĕçсĕррисен шутĕнчи 54 граждана вĕренме ятăмăр. Иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен ку вăл 22,7 процент нумайрах. Отчетлă тапхăрта 52 çын вĕренĕве вĕçленĕ, вĕсенчен 51-шĕ ĕçе вырнаçма пултарнă е тупăшлă вырăн тупнă.

3249 çынна профориентаци услугисемпе тивĕçтертĕмĕр. Вăл шутран 32,9 процентне профинформаци панă, 65,4 проценчĕ профконсультаци илме пултарнă, 1,7 процентне професси пĕлĕвĕ илме вĕренме яриччен професси тĕлĕшпе суйласа илнĕ.

Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшпе хушма пулăшу парассипе йышăннă тĕллевлĕ программăсемпе палăртнă мероприятисене пурнăçланă май 2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1157 çынна çакăнта явăçтарнă. Ку вăл çулталăклăха палăртнă çынсен хисепĕн 157,8 проценчĕ пулать.

Кунпа пĕрлех районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн специалисчĕсен ĕç ушкăнĕ вырăнти самоуправлени органĕсемпе пĕрле ĕçсĕр юлнă 4 çыннăн хăйсен ĕçне йĕркелесси пирки бизнес-планĕсене пăхса тухса ырланă. Вĕсене палăртнă укçа-тенкĕне уйăрса панă та ĕнтĕ.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Ĕçлес текен çын кирек хăçан та пурнăçра хăйĕн вырăнне тупма пултарать. Эпир вара вĕсене ку тĕлĕшпе пур енлĕн пулăшу пама яланах хатĕр.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.

Ыйту –хурав

Паспорт илекенĕн мĕн пĕлмелле?

Паспорт – пирĕн патшалăх символĕ, Раççейри кашни гражданинăн тĕп документĕ шутланать. 14 çул тултарнă Раççейри кашни гражданинăн паспорт пулмалла. Мĕн пĕлмелле паспорт илнĕ гражданинăн? Çак тата унпа çыхăннă ытти ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ РФ миграци службин управленийĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн территори пункчĕн ертўçинчен, шалти ĕçсен службин майорĕнчен З.М. СОРОКИНАРАН.

– Паян-ыран паспорт илме вăхăт çитсе пыракансене çак ыйту хумхантарать пулĕ. Мĕнле документсем кирлĕ паспорт илме?

– Паспорт илме 1П формăпа паспорт пама ыйтса заявлени çырмалла тата çурални çинчен калакан свидетельство кирлĕ. Çавăн пекех 35х45 мм калапăшлă сăн ўкерчĕк илсе килмелле. Вăл шурă-хура пулсан та каять, тĕслĕ пулсан та юрать.

Çавăн пекех паспорт илме хатĕрленекенĕн Раççей гражданствине кĕнине кăтартакан документсем тата патшалăх пошлинине тўлени çинчен калакан квитанци те кирлĕ пулать.

Асăннă документсене 3 кун хушшинче федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн пирĕн районти территори подразделенине çитермелле. Унта вĕсене документсене йышăнни çинчен калакан справка параççĕ. Паспорта документсене йышăннă кунран пуçласа 10 кун хушшинче хатĕрлесе параççĕ. Ку вăл паспорта вăл пурăнакан вырăнта хатĕрлеççĕ пулсан.

Ĕнчен те паспорта ăна илме хатĕрленекен хăй пурăннă çĕрте мар, урăх вырăнта хатĕрлеççĕ пулсан, çавăн пекех паспорта çухатнă хыççăн та ăна хатĕрлеме 2 уйăх кирлĕ пулать.

– Çын 20 е 45 çул тултарсан, паспорт улăштармалли йĕрке çинчен чарăнса тăрсан аванччĕ. Тен, хаçат вулакансенчен хăшĕ те пулин шăпах çак ўсĕме çитнĕ. Вĕсемшĕн асилтерў вырăнне пултăр сирĕн хуравăр.

– РФ гражданинĕ 20 е 45 çул тултарсан, 30 кун хушшинче паспорт улăштарма документсем хатĕрлесе памалла. Çак вăхăт иртнĕ хыççăн РФ Кодексĕн 19.15 статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшўллĕн вăйра тăман паспортпа пурăннăшăн право йĕркине административлă майпа пăснăшăн явап тытараççĕ. Урăхла каласан, 1500 тенкĕрен пуçласа 2500 тенкĕ таран штраф тўлеттереççĕ.

– Гражданин халиччен пурăннă вырăнтан урăх çĕре кайма шутлать пулсан. Калăпăр, вăл е ку хулана вĕренме кĕрет çамрăк. Е тата урăх облаçа ĕçе вырнаçать. Кун пек чухне мĕн тумалла?

– Енчен те гражданин хăй пурăнакан вырăнтан урăх çĕре куçас тет пулсан, малтан пурăннă вырăнтан хăй тĕллĕн регистрацинчен тухмасăр, пурăнма суйласа илнĕ çĕнĕ вырăнти регистрацишĕн яваплă пулса тăракан должноçри çынсем патне пымалла. Çакна валли пурăнмалли вырăнта регистрацие тăма ыйтса çырмалли 6-мĕш номерлĕ формăллă заявленире пурăнакан вырăнтан регистраци учетĕнчен кăларма ыйтса çырмалли татса илмелли заявлени вырăнĕ пур. Малтан пурăннă вырăнтан гражданина ăна çĕнĕ вырăнта регистрацие илекен органăн сотрудникĕсем çав вырăна запрос ярса регистраци учетĕнчен кăлараççĕ. Çапла вара гражданинăн паспортĕнче пĕр вăхăтрах вăл малтан пурăннă вырăнтан регистраци учетĕчен тухни тата çĕнĕ вырăнта адресне кăтартсах регистрацие тăни çинчен каланин оттискне лартаççĕ. Çĕнĕ вырăна килсен 6 кун хушшинче малтан пурăннă вырăнтан учетран тухса, çĕнĕ вырăнта регистрациленмелле.

– Енчен те урăх вырăна куçса кайиччен гражданин малтан пурăннă вырăнтан регистраци учетĕнчен тухсах каяс тет пулсан?

– Кун пек чухне унăн пурăнакан вырăнти регистраци учетне илессишĕн яваплă çын патне пырса хăйĕн тата 14 çул тултарнă çемье членĕсен регистраци учетĕнчен кăларма ыйтса ирĕклĕ формăпа заявлени çырмалла. Заявленире хăйсем куçса каякан вырăнти адреса тата личноça çирĕплетекен документсене те кăтартмалла.

– Енчен те çĕнĕ вырăнта çын тўрех регистраци учетне тăма ĕлкĕреймерĕ пулсан?

– Раççей Федерацийĕн право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан Кодексĕпе килĕшўллĕн куçса килнĕ çĕнĕ вырăнта регистрацие тăмасăр 7 кун ытларах пурăнсан тата пурăнмалли вырăн шутланман вырăнта 90 кун ытларах пурăнсан, 1500 тенкĕрен пуçласа 2500 тенкĕ таран штраф тўлеттереççĕ.

– Тавах, Зоя Михайловна, каласушăн.

Л. ПАВЛОВА каласнă.

Аттепе аннене суйламаççĕ

Чунри юратăва ĕçсех ярайман пулсан...

– Тăхăн, тăхăн, тетĕп. Сана калатăп тăхăн тесе, – хĕрарăм кăшкăрни урамранах илтĕнет Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Çĕньял Шурчари пĕр килте. Районти ăнăçсăр семьесем тăрăх тухнă районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделени ĕçченĕсем, район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен комисси членĕсем, социаллă хўтлĕх пайĕн семьесемпе ĕçлекен, районти вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачалăха сыхлассипе ĕçлекен специалисчĕсем малтанах нимĕн те ăнланаймарĕç. Килте хĕрарăмсăр пуçне тата çитĕннисенчен кам та пулин пур пулĕ тесе шутларĕç. Пўрте кĕрсен, тĕлĕннипе хытсах кайрĕç. Сĕтел патĕнче пĕчĕк хĕр ача тăрать. Ўсĕр амăшĕ, С. Клинк, кухньăра пирус турттса лараканскер, ун çине кăшкăрать иккен. Упăшки Владимир Геннадьевич ĕçре.

– Эсĕ çак ача çине кăшкăратăн-и? – чун ыратнине те, тарăхнине те пытараймарĕç комисси членĕсем.

Çулталăкран кăшт çеç иртнĕ ача хăй тĕллĕн тумланма пултарайманнине те ăнланми пулнă-ши вара пуçне эрехпе минретнĕ 2 ача амăшĕ.

Пĕр эрне хушшинче ăнăçсăр семьесенче пулнă май мĕн кăна курмарĕç пулĕ вĕсем.

Хумханмасăр каласа параймасть вĕсем çинчен районти вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачалăха сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалист-эксперт И.С. Кабуркина. Кашни ялта тенĕ пекех пур вĕсем, ачисене эрех черккипе улăштарнă ашшĕ-амăшĕсем. Çитменнине çамрăксем ĕçке ерсе пыраççĕ. Çамрăк ача амăшĕсем пĕчĕк тĕпренчĕкĕсене çак ниме тăман усал шĕвекпе улăштараççĕ. Кĕçĕн Тутаркасри Т.Э. Аксакова ăнланать-ши хăй мĕн пысăкăш йăнăш тунине? Ачисем тăван амăшĕпе пурăнма май çуккипе тăванĕсем патĕнче пурăнаççĕ. Каçарĕç-ши вĕсем кайран амăшне? Йăнăша тўрлетме пултарать-ха вăл. Кăмăл çеç кирлĕ çакна валли. Тата – хăй кун-çул панă ачасен пурнăçĕшĕн хăй яваплă пулса тăнине ăнланни.

Вомпăкассинче пурăнакан Е.Н. Сибякова вара хăçан кун пек тĕрĕс пĕтĕмлетў тăвасси пирки шутламалли те çук. Рейда хутшăнакансене вăл хăратсах пăрахрĕ. Ўсĕр ним туйми çывăраканскер çинчен тўрех мĕн шутлама пултартăр пырса кĕнĕ çын. Миçе хутчен каласнă пулĕ унпа çўлерех асăннă комисси членĕсем – анчах усси çук. 11 çулхи ывăлĕ хăй тĕллĕнех ура çине тăрать тет-ши?

Ильинка ял тăрăхĕнчи Хунтăкассинче пурăнакан Вера Василевнапа Алексей Михайлович Кабуркинсем мĕн тесе ĕçеççĕ-ши тата. Çын пурăнма май çук условисенче пурăнакан 6 çулхи ывăлĕ аттепе анне ăшши мĕн иккенне пĕлет-ши? Кабуркинсен вара пуçра та пĕр шухăш кăна: ăçтан эрех тупса ĕçмелле?

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Юрпашра та çук мар кун пек çемьесем. Валентина Витальевнапа Геннадий Гордианович Германовсен те нихăшĕн те пўрт-çурт тасатма та, ача пăхма та вăхăт çук. Эрех ăшне путнăскерсемшĕн тăван килте ăпăр-тапăр купаланса выртни те ним те мар.

Вĕсенчен инçех те мар пурăнакан Е.В. Николаевана та намăс мар-ши? Аслă хĕрĕ амăшĕ ĕçнине пула кукамăшĕпе пурăнать. Тепĕр иккĕшĕ те хăйсене çуратнă амăшне сайра-хутра çеç урă кураççĕ. Юрать-ха, ашшĕ пăхать ачисене. Çемье йăлтах ун çинче тытăнса тăрать.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи И.Г. Софронова тата хăйĕн ывăл ача пурри çинчен манса кайман-ши? Иккĕленмелле çав. Çакăн çинчен асра тытса тăнă пулсан эрехпе иртĕхнĕ пулĕччĕ-ши? Асламăшĕ чирлемен чухне пăхатчĕ-ха мăнукне лешĕ. Халь вырăнпах выртканскерне хăйне пăхмалла. Ираида Германовна ывăл çинчен те, ватă çын çинчен та манса кайнă. Иккĕшне те кўршĕсем пăхаççĕ.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çĕньял Хуракасси ялĕнчи Т.В. Малыгина миçе хутчен ĕçме пăрахма сăмах паманши? Пĕр путсан, эрех ăшĕнчен тухма çăмăл мар пулĕ çав. Хальлĕхе вара мăшăрĕ пĕчченех тăрăшать-ха çемьешĕн.

Кашмашри Кирилловсем мĕн çинчен шухăшлаççĕ-ши тата? Мĕн çинчен пулсан та, ачисем çинченех мар пулĕ çав. Çулла вĕсен ачине лагере кайма путевка сĕнчĕç районтан. Анчах та амăшĕ Елена Ивановна ачине лагере пуçтарса яма вăхăт «тупаймарĕ». Вăл ачашăн тăрăшнă вăхăтра ун вырăнне такам урăххи эрех ĕçесрен хăрарĕ-ши? Мăшăрĕ Геннадий Алексеевич аякран укçа туса килсен иккĕшĕ пĕрле ларса ĕçеççĕ. Вăл килте мар чухне те хĕрарăм пĕччен ĕçсех ларас мар, тесе шутламасть çав.

Юнкăри М.Г. Аргандеева тата хăçан тĕрĕс пĕтĕмлетў тăвать-ши? Икĕ ачишĕн хăй пурнăç тĕрекĕ пулмаллине, килти тирпей-илем унран килнине ăнланса илсен тем пекехчĕ.

Çармăçкассинчи Сытинсем хальлĕхе ачисем çинчен шутлани курăнмасть-ха. Рейд вăхăтĕнче Ольга Георгиевна та, мăшăрĕ те ним пĕлми хыпса лартăччĕ эрехе.

Хорнуй ял тăрăхĕнчи В.Г. Павлова хăçан ăнланса илĕши тата эрех хуйха-суйха ирттерсе яма пулăшманнине. 6 тата 2 çулхи ачисене кам пăхать тесе шутлать-ши вăл?

Кĕрекаçри М.В. Черепановапа Э.Г. Еремеевана та эрех туслаштарать пуль çав. Рейд вăхăтĕнче Еремеевана кураймарĕç унта хутшăннисем. Черепанова вара хăйĕн ятне манса каймаллах ĕçсе лартăччĕ. Çак икĕ юлташ хăйсен ача пуррине аса илеççĕ-ши? Марина Валентиновна пĕр хушă ĕçмен-ха. Халь кам ирĕксĕр карланкăран ярать-ши ăна?

Катькас ял тăрăхĕнче те ик юлташ пур. Пĕр-пĕрин патне час-час хăнана çўреççĕ Кораккассинчи Р.Б. Яшковапа Г.М. Самойлова. Пĕррехинче Самойлова патĕнче ĕçнĕ чух районти «делегацирен» Яшкова ампара тарса пытăннăччĕ. Хальхинче вара Кораккасси хĕрарăмĕ «хăнасене» Чурикассинче пулăштухпах кĕтсе илес тенĕ курăнать. Рейда хутшăнакансем пынă чухне вăл шăпах хул хушшине пĕр кĕленче хĕстерсе Яшкова патне йăкăштаттаратчĕ.

Шел пулин те, чакмасть çакăн пек çемьесен списокĕ районта. Тата та малалла каласа кайма пулать вĕсем çинчен. Çурлатринчи Андреевсемшĕн те ачисенчен ытларах эрех хаклă.

– Эпир пырса кĕнĕ чух кĕçĕнни, çулталăк çурăри ачи пĕчченехчĕ килте. Мĕнле чĕнсен те, кăшкăрсан та никам та сас памарĕ, – лăпкăн каласа параймасть ниепле те Ираида Семеновна.

4 ача амăшĕ урайĕнче ним туйми ыйха путнă. Мăшăрĕ те урă мар иккен. Ачасен шăпи нихăшне те хумхантармасть пулас.

Чамăшри Васильевсен те 4 çулхи ачи çинчен шухăшлама вăхăт çук. Тепĕр иккĕшĕ çитĕннĕ ĕнтĕ. Рейд кунĕнче вĕсем ачине садика кайса илме те вăхăт тупайман: унта кайсан черккe сахалтарах лекет-çке.

– Ача садне хамăн каймалла пулчĕ, – хаш! сывлать И.С. Кабуркина. – Ачана хамăрпа пĕрле реабилитаци палатине илсе килме тиврĕ.

Ваттисен сăмахĕнче сăмах панине пурнăçласа 3 çул кĕтмелле, теççĕ те, Нискассинчи Н.В. Мясникова çакна лайăх асра тытать пулас. Вăл ĕçме пăрахма сăмах пани 2 çул кăна çитнĕ-ха. 2 çул çурăри пепкине хăй ўсĕр чухне кам пăхать-ши?

Асăрханă-и эсир çурисене кăларса пăрахнине курса кушак юлашки çурине майĕнчен çыртса вĕçертменнине? Тилмĕрекен куçĕсемпе кил хуçи хĕрарăмĕ çине тинкернине? Чĕлхи пулсан, тем пекех ыйтăччĕ ачине хăварма. Хĕрхенчĕ хĕрарăм: тĕкĕнмерĕ юлашки çурине. Амăшĕ вара çурине çуларĕ, ачашларĕ, хăйĕн чĕлхипе каласрĕ...

Ачисене эрех черккипе улăштарнă ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсене кушак çурине юратнă чухлĕ те юратмаççĕ иккен. Опекунсемпе пурăнакан 80 ачаран 31 тăлăх ача пулсан, ытти сем ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех вĕсен ăшшисĕр юлнăскерсем. Кăçал кăна çакăн пек 14 ачана тупса палăртнă. Вĕсенчен 13-шне опекунсем пурăнма илнĕ, пĕр ачана интерната вырнаçтарнă. Ватăлсан аса илеççĕ-ши вара вĕсем çинчен ашшĕ-амăшĕ? Ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарнă 33 çын кая юлса та пулин хăйсем тунă йăнăша тўрлетме шутлаççĕ-ши? Кăçал кăна 3 çынна çак правасенчен хăтарнă. Çапла майпа 4 ача çĕр çинчи чи сывăх çыннисем чĕрĕ-сывă çĕртех вĕсен хўтлĕхĕсĕр юлчĕç. Хўтлĕх çинчен каласма-и кунта? Тепĕр çынна ашшĕ-амăш прависенчен чикĕлерĕç. Вĕсене хăйсене хўтлĕх кирлĕ. Эрехрен хўтĕлемелле. Анчах кăна никамăн та мар, хăйсен тумалла. Районти çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хўтĕлекен комисси ларăвĕнче кăçал пăхса тухнă 86 ашшĕ-амăшĕн те. Опека органĕнче учетра тăракан 92 ăнăçсăр çемьен çак лачакаран тухма вăй çитересчĕ. Унсăрăн вĕсенче çитĕнекен 203 ачашăн çемçе кукăльпе ăшă таса вырăн юмахри пек ĕмĕтре çеç юлĕ.

Пур вĕт-ха пач ют ачанах ашшĕ-амăш ăшшине паракансем. Кун пек çемьесем районта 11 йĕркеленчĕç, вĕсенче 15 ачана пăхма илнĕ. Акă камсенчен тĕслĕх илмелле ачисем çинчен манса эрех ытамне ыткăнакан ашшĕ-амăшĕсен. Чунри юратăва вăратма нумай кирлĕ мар вĕт. Вăл упранать пулсан. Çўлерех асăннă ашшĕ-амăшĕсем ăна ĕçсех яманнине шанас килет.

Л. ПЕТРОВА.